# Сентябрĕн 22-мĕшĕ—Н. И. Ашмарин çуралнă 95 çул

# АШМАРИН ХĂЙ ÇИНЧЕН

Николай Иванович Ашмарин, совет чĕлхе тĕпчевçи, тюрколог, фольклорист, 1870 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче, Етĕрне хулинче (Чăваш АССР) çуралнă. Тĕрĕк халăхĕсен чĕлхисене тĕпчесе çырнă чаплă кĕнекесемшĕн ăна СССР Наукисен Академийĕн член-корреспондентне суйланă. Чăваш ĕç çыннисем Н. И. Ашмарина Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн членне суйласа янă.

Н. И. Ашмарин профессор наукă енĕпе çырнă нумай кĕнекисенче Атăл тăрăхĕнчи халăхсен чĕлхисене тĕпченĕ, вăл пуринчен ытларах чăваш чĕлхипе фольклорне тĕпчесе вĕреннĕ. Н. И. Ашмарин çырнă вун çичĕ томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» (словарĕ) унăн тĕп ĕçĕ шутланать. Ку словаре вăл вăтăр çул ытла ĕçлесе хатĕрленĕ. Словарьте революцичченхи чăваш чĕлхипе культурине тата чăваш халăхĕн пурнăçне пĕлме пулăшакан хаклă материалсем нумай.

Н. И. Ашмарин Октябрь революцийĕн малтанхи кунĕсенчех çĕнĕ культурă аталантарас ĕçе хутшăнса ĕçлеме килĕшнĕ, Совет влаçне наукă ĕçĕнче ĕçлекен кадрсем хатĕрлеме нумай пулăшнă.

Н. И. Ашмарин эпир «Тăван Атăлăн» çак номерĕнче пичетлекен «Автобиографине» 1919 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче çырнă, Наркомнацăн Чăваш пайне ярса панă. Ăна историксем КПСС Чăваш обкомĕн архивĕнче тупнă (фонд 4, оп. 1, д. 68, лл. 3—4). Пичете валли В. А. Долгов хатĕрленĕ тата чăвашла куçарнă.

* * *

Хăйĕн «Автобиографинче» Н. И. Ашмарин акă мĕн çырать:

«Эсир ыйтнипе Сире çакна çырса пĕлтеретĕп.

Эпĕ Хусан кĕпĕрнинчи Етĕрне хулинче çуралнă, анчах хамăн тăван вырăнăм тесе Кăрмăш хулине (Чĕмпĕр кĕпĕрни) шутлатăп. Унта манăн ача чухнехи пурнăç иртрĕ.

Чăваш чĕлхипе паллашма эпĕ гимназире вĕреннĕ вăхăтра, хам 13 çулта чухне, тытăнтăм. Эпĕ чăваш чĕлхине хам тĕллĕнех вĕрентĕм, манăн учитель те пулман, пособисем те пулманпа пĕрех, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхине вĕренес ĕçре пĕтĕмĕшле пĕлӳ пама пултаракан лайăх кĕнекесем ун чухне çукчĕ. Çавăн пирки эпĕ вăл чĕлхене питех те вăрах вăхăт хушши вĕрентĕм, çитменнине тата эпĕ чăвашсем хăйсем пурнăçра мĕнле калаçнине сайра хутра çеç илтеттĕм. Чулхулари гимназирен вĕренсе тухас умĕн çеç эпĕ чăваш чĕлхине чăнласах чухлакан пултăм тата унăн йĕрки хăйне евĕрлĕ тĕрĕк чĕлхинчи пек йĕрке пулнине пĕлсе çитрĕм. Чăваш чĕлхине вĕреннĕ чухне эпĕ унпа пĕр пек чĕлхесене тĕпчеме кирлине ăнланса илтĕм, çапах та вăл маншăн яланах тĕп ыйту, хамăн наукăри ĕçĕме пăхăнтармалли предмет пулса тăчĕ.

Ку таранччен эпĕ çак кĕнекесене пичетлесе кăлартăм (вĕсем чăвашла тухман, çавăнпа та вĕсен ячĕсене эпир вырăслах хăваратпăр.— Ред.): «Материалы для исследования чувашского языка (фонетика и морфология)», «Опыт исследования чувашского синтаксиса» (I-ая ч.), «Сборник чувашских песен», «Болгары и чуваши» (чăвашсемпе Атăл тăрăхĕнчи пулхăрсем хушшинчи пĕрлĕхсем çинчен), «Об одном мусульманском могильном камне на «Архиерейской даче» в Казани», «Основы чувашской мимологии» тата чăваш чĕлхи словарĕн икĕ кăларăмĕ. Çак словаре çырма кирлĕ материалсене эпĕ çирĕм çул хушши пухрăм. Анчах словаре хатĕрлесе çитерме мана чир тата йывăр пурнăç кансĕрлерĕ; паянччен А саспаллипе пуçланакан сăмахсене кĕртнĕ 320 страницă çеç пичетленчĕ, словарĕн ытти материалĕсем пичетленсе тухаймарĕç. Çавăн пекех эпĕ чăваш чĕлхинчи евĕрлев сăмахсене (подражательные слова.— Ред.) тĕпчесе çырнă ĕçе те пичетлесе кăлараймарăм. Ку ĕçре эпĕ сăмахсем мĕнле пулса пынин тупсăмне тĕпчесе пĕлме тăрăшрăм.

Ман ĕçĕмĕн тĕллевĕ — чăвашсен пурнăçне пур енчен те тĕпчесе пĕлесси, вĕсен пурнăçĕ хăйсем калаçакан чĕлхере палăрса тăрать. Наукă интересĕсемпе пĕрле мана тата чăваш халăхĕн культурăллă шайне хăпартассишĕн ĕçлес шухăшсем те хаваслантарчĕç. Чăваш халăхĕн кун-çулĕ тăван вырăс халăхĕн кун-çулĕ пекех манăн чĕрене çывăх.

Н. АШМАРИН»

* * *

Н. И. Ашмарин чаплă совет тюркологĕ пулнă, вăл чăваш халăхĕн чĕлхипе фольклорне питех те тĕплĕ пĕлнĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чăваш халăхĕн историпе культурине, чĕлхипе литературине тĕпчесе вĕренес ĕçе панă, хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе вырăссемпе чăвашсем хушшинчи туслăха тĕреклетме пулăшнă. Вăл паха та илемлĕ туслăх.